Композитор парнисем

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă пĕррремĕш профессионал композиторсем виççĕн: Федор Павлов, Степан Максимов тата Григорий Лисков.

2010 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче Григорий Лисков çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Пулас композитор Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1907-1915 çулсенче Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ.

«Шкултан вĕренсе тухсан Иван Яковлев ăна та хăй патнех ĕçлеме хăварнă, – çырать ун пирки Юрий Илюхин музыковед. – Григорий Григорьевич унта ачасене сĕрме купăспа калама хăнăхтарнă. Çав вăхăтрах хăй те музыкăна малалла вĕренсе пынă. 1917 çулта вара Хусанти музыка училищинче экстерн йĕркипе экзамен тытать, музыка преподавателĕн ятне илет».

Шăпах Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çулсенче Григорий Лисков Атăл тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенче çӳресе халăх юррисене çыра-çыра илет. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче вăл çырса илнĕ 1300-е яхăн юрă упранать. Çав шутра «Пиçнĕ-пиçмен çырлишĕн», «Ямпах урам», «Апла каламасан», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Чĕкеç вĕçет çӳлелле», «Бурлаксен юрри» тата ытти те.

Каярах пирĕн ентеш чăваш ялĕсенчи шкулсенче çавăн пекех хăй çуралса ӳснĕ Чăвашкассинче те ачасене вĕрентнĕ. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Иван Яковлев тăрăшнипе ку ялта çĕнĕ шкул уçăлнă. Унта эпĕ ас тăвасса пианино пурччĕ. Ялта сĕрме купăс калама пĕлекен ватă йышлăччĕ. Вĕсем, ахăртнех, Григорий Лисков вĕренекенĕсем пулнă.

1921 çулта Атăл тăрăхĕнче выçлăх хуçаланнă. Лисковсен çемйи Çĕпĕре тухса каять. 1923-1931 çулсенче Новосибирск, Семипалатинск тата Алма-Ата хулисенче партипе совет органĕсенче ĕçлет. 1931 çулта Шупашкара пурăнма куçать. Культурăн тĕрлĕ учрежденийĕнче тата музыка училищин преподавателĕнче вăй хурать. Çав шутрах Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче 25 çул тăрăшнă. Унăн вĕренекенĕсенчен нумайăшĕ çĕр-шыври консерваторисенче ăсталăха ӳстерсе композиторсем, дирижерсем, тĕрлĕ инструментпа калакан музыкçăсем пулса тăнă. /Герман Лебедев, Виктор Ходяшев, Григорий Хирбю, Филипп Лукин, Федор Васильев композиторсем, Петр Филиппов виолончелист т.ыт.те./.

Григорий Лисков витĕмне пулах Чăвашкасси каччисем Михаилпа Никонор Афанасьевсем Шупашкарти музыка училищине вĕренме килнĕ /ку – вăрçăчченхи çулсенче пулнă/. Йывăр пурнăçа пула Михаил Иванович унта вĕренсе пĕлӳ илеймен, анчах вăл та сĕрме купăспа лайăх калатчĕ. Унăн шăллĕ Никонор вара паллă виолончелист, кайран Саратов консерваторине вĕренме кĕнĕ. Шел, вăрçăри суранĕсене пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Михаил Иванович хăйĕн хĕрне Зойăна Шупашкарти музыка училищине вĕренме янăччĕ. Зоя Михайловна унтан ăнăçлă вĕренсе тухса чăваш юрăпа ташă ансамблĕнче юрларĕ. «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки» ята тивĕçрĕ. Халĕ вăл Ульяновск облаçĕнчи Çĕнĕ Чĕмпĕр хулинчи культура керменĕнче чăвашсен музыка культурине пропагандăлассипе ĕçлет.

Иртнĕ ĕмĕрти 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарта хамăрăн паллă ентешпе паллашма тӳр килнĕччĕ. Хăш-пĕр сăввăма юрă çырма суйласа илчĕ. Анчах шухăшланине пурнăçласа ĕлкĕреймерĕ, часах çĕре кĕчĕ.

Чылай çул иртнĕ хыççăн халĕччен пичетленмен çак сăвва Юрий Кудаков композитор патне яраса патăм. Вăл ăна юрра хыврĕ. 2007 çулта «Малтанхи юрату» юрă «Ах, мĕнма-ши?..» юрăсен пуххинче тухрĕ.

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Григорий Лисков музыкипе илемлетнĕ «Чакка» драмăна курнăччĕ. Композитор Атăл хĕрринчи кивĕ суртра пурăнатчĕ. Çавăн чухне ун патне пырса паллашсан вăл мана хăйĕн тин çеç пичетленсе тухнă «Юрă урокĕсем» кĕнекине алă пусса парнелерĕ.

Чăвашкассинче Иван Яковлева халалласа уçнă шкул музейĕнче те пур композиторăн парне-кĕнекисем. Иккĕшĕ «Юрлар-ха, тантăшсем» ятлă.

Чăвашкасси шкулĕнче 50 çул ытла ĕçленĕ ентешĕмĕр, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Мария Бикмендеева пуçарнипе 1983 çулта ялта уяв касĕ иртнĕччĕ. Аслă вĕрентекенĕмĕре чысласа Асăну хăми çакнăччĕ тата класс пӳлĕмĕсенчен пĕринче музей уçăлнăччĕ.

Аякра тĕпленнĕ ентешсем тăван ене килсен чи малтан Иван Яковлев шкулĕпе унăн музейне кĕрсе тухаççĕ. Çавнашкал хăнасенчен композитор тăванĕсем – Çĕпĕрте пурăнакан Петр Лисков, Хусанта тĕпленнĕ, çамрăк чухне Самарта тухса тăнă «Колхозник» хаçатра ĕçлесе тăван литературăна иленнĕ Афанасий Лисков та пулнă. Шăпах çавăн чухне Петр Васильевич композитор парнеленĕ кĕнекисене шкул музейне парса хăварнă.

■ **Анатолий ЮМАН**